Муркаш район хаçачĕ

Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

28 (7882) № ✻ Шăмат кун, 2011 çулхи апрель (ака) уйăхĕн 16-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Йывăрлăхсене çĕнсе малалла пăхаççĕ

Выльăх пăхакансен пĕрлехи кунĕнчен

Ака уйăхĕн 13-мĕшĕнче Ильич яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативне çитсе куртăмăр. Фермăсенче ĕçлекенсемпе, зооветспециалистсемпе тата хуçалăх ертӳçипе тĕл пулсан вĕсем хăйсем кăçал епле хĕл каçнинчен тĕлĕннине ăнланма пулать. Пĕлтĕр хуçалăхăн пĕтĕмĕшле таса тупăшĕ 3,5 млн тенкĕпе танлашнă. Вăл шутран выльăх-чĕрлĕх отраслĕ 2,2 млн тенкĕ тупăш панă. Анчах пĕлтĕрхи шăрăх çанталăка пула хĕл каçа хуçалăх 5,3 млн тенкĕлĕх выльăх апачĕ туяннă. Мĕнле йывăрлăх тăрать çакăн хыçĕнче? Ăна Вăçкассисемпе Купăрлясем çеç лайăх ăнланаççĕ.

– Кĕркунне пуçламăшĕнче выльăх кĕтĕвне сыхласа хăварассине тĕп тĕллеве лартса хĕле кĕтĕмĕр. Паллах нумай çухату тӳсме тиврĕ, анчах чăтрамăр. Хуçалăхăн иртнĕ çулхи выльăх апачĕ хĕл пуçланнă тĕле вĕçленчĕ пулсан та алă усмарăмăр. Çакăнта манăн хуçалăхри специалистсене, хăйсен ĕç вырăнĕсене пăрахман выльăх пăхакансене тав сăмахĕ калас килет. Ырă сăмаха «Свобода» хуçалăх ĕçченĕсемпе вĕсен ертӳçи В. Ананьев та тивĕçлĕ. Вĕсем пире вăхăтра сутнă улăмпа 3 уйăх пĕр сăмахсăрах пурăнтăмăр. Ыранхи кунпа пурăнса выльăх апатне хамăр районта шыранипе çеç лăпланмарăмăр. Хĕл каçа Чул хула облаçĕнчен 237 тонна утă, республикăри кăнтăр районĕсемпе Чул хула облаçĕнчен татах 450 тонна улăм, апатçимĕç фондĕнчен 100 тонна тырă туянса хĕл кунĕсене хыçа хăварса пыратпăр. Çапла вара пĕрлехи тăрăшулăхпа выльăхсен кĕтĕвне сыхласа хăвартăмăрах. Тавах уншăн пурне те! – хăйĕн чун ыратăвне палăртса калаçать хуçалăх ертӳçи тата район пуçлăхĕ И. Николаев.

Игорь Васильевич хуçалăхри ĕç-хĕлпе пĕрлех районти лару-тăрăва та алăра тытни курăнчĕ. Унăн сăмахĕнчен районти хуçалăхсем иртнĕ хĕл кунĕсенче выльăх кĕтĕвне упраса хăварассипе пĕтĕмпе 44 млн тенкĕлĕх выльăх апачĕ туяннă. Çакă мар-и-ха вăл район сăн-сăпачĕ, вăл ыранхи кунпа ĕçлени?

– Хуçалăх ертӳçипе специалистсем тăрăшнипе пăрусем умĕнче паян утти те, сенажĕ те, çăнăхĕпе комбикормĕ те çителĕклĕ. Пур апатпа перекетлĕ пуласси вара – пирĕн тивĕç, – терĕç пăру пăхакансем.

Выльăхсене вăхăтра апат паракансем, тислĕк тухассине пăхса тăракансем те хăйсен ответлăхне туйса ĕçлеççĕ. Ирех вĕсем хăйсен ĕç вырăнĕнче. **Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан** (сулахайран сылтăмалла) А. Федоров, В. Петров, В. Федоров хăйсен тăрăшулăхĕ хуçалăх экономикишĕн пулнине ăнланаççĕ.

А. БЕЛОВ.

Районта

Çур акине хатĕрленсе

Апрелĕн 15-мĕшĕ тĕлне районĕпе кăçал çур аки ирттерме 25700 тонна вăрлăх хатĕрленĕ. Ку вăл ака ĕçĕсем валли çитмелле. Вăрлăхăн 86,7 проценчĕ кондиции ларать.

1897 тонна çĕр улми вăрлăхĕ янтăланă.

Çур аки валли минераллă удобрени 1845 тонна кирлĕ пулсан хальлĕхе 926,7 тонна (50,2 процент) пур. «Ударник», «Путь Ильича» агрофирма» ООО тата «ВаСем» ООО ăна 100-шер тонна турттарса килнĕ.

Çунтармалли-сĕрмелли материалсем 246 тонна (54 процент) пур. «Герой», Чкалов яч. хис. хуçалăхсем ку тĕлĕшпе васкаварлă.

Видеоконференци

Сывлăхлă пулмалла

Пĕтĕм тĕнчери сывлăх кунне халалласа республикăра «Сывлăхлă Чăваш Ен» видеоконференци иртрĕ. Ку мероприятие Чăваш республикин Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану тата Спорт министерствисем, муниципалитет йĕркелĕвĕсен канашĕ иртторчĕ.

Чи малтанах пухăннисене ЧР сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министрĕ В.Муллина пĕтĕмĕшле ĕç-хĕлпе паллаштарчĕ. Сывлăх чи хаклă пуянлăх пулнине, çавна май ăна упрамаллине, обществăра профилактика хутлăхĕн пĕрлехи модельне йĕркелемеллине палăртрĕ.

– Халăх сывлăхĕ стратеги потенциалĕшĕн, наци хăрушсăрлăх факторĕшĕн, общество тĕреклĕхĕшĕн тата тăнăçлăхĕшĕн пĕлтерĕшлĕ пулнине пирĕн йышăнма тивет, – терĕ вăл.

Ял хăлăхĕн сывлăхне республикăра 500 яхăн пĕтĕмĕшле практика врачĕн офисĕ тĕрĕслесе тăрать. Унсăр пуçне сывлăх шкулĕсене те çынсен сывлăхĕшĕнех йĕркеленĕ. Чăваш Республики 2004 çултанпа Пĕтĕм тĕнчери сывлăх сыхлавĕн Европăри «Регионсем – сывлăхшăн» тытăмĕн тулли праваллă членĕ шутланать. Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкар «Сывлăхлă хуласем» тытăмĕн аккредитацилене членĕсем пулса тăраççĕ.

Районта та вара ку енĕпе тимлемелли ĕç сахал мар, сывлăха çирĕплетме май паракан ĕç-хĕле халăха ытларах явăçтарма тăрăшмалла. Сывлăх пирки хавшасан кăна мар, унччен чылай маларах тимлемелле тата упрамалла. Ӳт-пĕве çирĕплетмелли, пиçĕхтермелли майсем чылай. Кăмăл тăвакансем валли ялсенче спорт стадионĕсем ĕçлеççĕ, Муркашри сывлăха çирĕплетмелли комплексра та тĕрлĕ майсем пур, ӳркенмелле мар кăна. Сăмах май çакна та палăртса хăвармалла. Аслă ăрури çынсем çакăнта хапăл туса çӳреççĕ, çамрăксемшĕн ырă тĕслĕх пулса тăраççĕ.

– Спорт вăййисене, ăмăртăвĕсене çӳрессинче чи малтан ял тăрăхĕн пуçлăхĕсен ырă тĕслĕх кăтартмалла, тĕрлĕ мероприяти йĕркелеме пĕлмелле. Çапла майпа ӳсекен ăрури те, аслă çулсенчи те сывлăх чи хаклă тупра пулнине туйма пултартăр, – терĕ район администрацийĕн пуçлăхĕ Юрий Александрович Иванов пурне те сывлăха упрама, спортпа туслă пулма йыхравласа.

Р. ИЛЛАРИОНОВА.

Апрелĕн 19-мĕшĕ – Çĕпе тивĕçтерекен службăра вăй хуракансен кунĕ

Çĕçĕ кăткăс, анчах усси пысăк

1991 çулхи апрелĕн 19-мĕшĕнче 1032-1 № «РСФСР-та çĕпе тивĕçтересси çинчен» РСФСР Саккунне йышăннă май çынсене çĕç тупса парас, вăхăтлăх çĕçлеменнисене социаллă пулăшу мелĕсемпе тивĕçтерес тĕлĕшпе пĕрлехи патшалăх политикине тытса пыма кирлине палăртса Чăваш ССР Министрсен Канашĕн 1991 çулхи июнĕн 28-мĕшĕнчи йышăнавĕпе çынсене çĕпе тивĕçтерессин республикăри патшалăх службине туса хунă. Хыççăнах районта та çĕпе тивĕçтерессин бюровĕ йĕркеленнĕ. 1991 çулхи сентябрĕн 11-мĕшĕнче ăна ертсе пыма Тамара Афанасьевна АНТОНОВĂНА çирĕплетнĕ. Паян кунченех вăл çак çĕçре. Хăйсен професси уявĕ умĕн эпир ăна калаçăва чĕнтĕмĕр:

– Çĕпе тивĕçтерекен службăна пыракансем сахал мар. Кусем вĕсем çĕç шыракансем, професси пĕлĕвĕ илес шухăшлисем, хăйсен çĕçне тытăнас текенсем т. ыт. те. Вĕсем – пирĕн район çыннисем. Манăн çĕç яланлăх тесе никам та калама пултараймасть. Рядовой çынсем кăна мар, администраци пуçлăхĕсем, предприятисемпе организацисен ертӳçисем те çĕçĕр тăрса юлнă тĕслĕхсем сахал мар. Кунсăр пуçне юлашки вăхăтра çĕç шыракансем хушшинче професси паракан вĕренӳ заведенийĕсенчен вĕренсе тухнисем те ытларах та ытларах. 20 çул каялла – 1991 çулта çĕçĕррисем тесе 3 çынна шута илнĕ пулсан, 2010 çулта – 601 çынна. Çулталăкĕпе вара пирĕн пата çĕçе вырнаçтарма пулăшу ыйтса 1354 çын килчĕ.

20 çул хушшинче кризис тапхăрĕсем сахал мар пулчĕç. Çĕçĕррисене чи нумайăн 2009 çулта регистрацилене. Ун чухне вĕсем 737 çынна çитнĕччĕ. Вĕсен хисепĕ тата пысăкрах та пулма пултарнă. Çĕçĕрлĕхе асăрхаттарассипе тĕрлĕ программăсем пурнăçа кĕртни ку енĕпе лару-тăрăва ытлашши кăткăслатмарĕ. Кусем вĕсем çынсене маларах çĕнĕ професси пĕлĕвĕ парасси, çĕçĕр тăрса юлма пултаракансене урăх çĕçе вырнаçтарасси, хăйсен çĕçне пуçăнакансене тата предпринимательствăна пулăшни. Хамăршăн çĕнĕ çак программăсене эпир вăхăтра çĕçе кĕртме пултартăмăр, вĕсене пĕтĕмпе 2246 çын хутшăнчĕ.

Юлашки çулсенче экономикăра вăй хуракансен шучĕ чакрĕ. Вуншар предприятире çынсем тулли çĕç кунĕпе çĕçлемеççĕ. Çĕçĕрлĕх шайĕ 2009 çулхи январь уйăхĕнчен тытăнса май уйăхĕччен 0,65 процентран 1,35 процента çитрĕ.

Апла пулин те районта кризиса чарса лартмалли мерăсем йышăннă май лару-тăрăва алла илтĕмĕр темелле. Квалификациллĕ рабочисем валли вăхăтлăх ĕç вырăнĕсем, «Стажировка» программăпа шкулсенчен вĕренсе тухакансем валли ĕç вырăнĕсем туса патăмăр. Çĕлекенсене маларах тĕрлĕ профессисене вĕрентни, харпăр хăйĕн çĕçне тытăнма майсем туса пани пысăк тĕкĕ пулчĕ. Обществăлла ĕç вырăнĕсем те сахал мар йĕркеленĕ. Район ертӳçисем те ку çĕçсенче пулăшсах пычĕç.

Çĕç рынокĕнче Раççей шайĕнче те юлашки вăхăтра лару-тăру тăнăç. Ахальтен мар ĕнтĕ çĕпе тивĕçтерекен патшалăх служби урлă кризиспа кĕрешмелли мероприятисене пурнăçа кĕртме çĕршер миллиард тенкĕ тăкаклана. Юлашки вăхăтра вара патшалăх инвалидсене, ача пăхмалли отпускра пулнă хыççăн çĕçе тухма хатĕрленекен амăшĕсене çĕçпе тивĕçтересси çине ытларах тимлĕх уйăрма палăртать. Хăйсен çĕçне пуçăнассин программине финансласси ӳсрĕ, çакăн усси те куç умĕнчех.

Район экономики аталанса пыма тивĕç. Çавна валли вара районта пур условисем те çителĕклĕ. Пĕчĕк тата вăтам бизнес аталанăвĕ ку енĕпе пысăк усă памалла.

Эпир унччен хăйсене лайăх енчен кăтартса панă программăсем тĕлĕшпе малашне те çĕçлесе пырăпăр. Кусем вĕсем стажировкăсем, обществăлла тата вăхăтлăх ĕç вырăнĕсем йĕркелесси, профессисене маларах вĕрентесси, хăйсен çĕçне йĕркелекенсене пулăшасси, инвалидсене çĕçе явăçтарасси т. ыт. те. Кунсăр пуçне 2011 çултан тытăнса çĕнĕ программăсем те çĕçлеме пуçăнаççĕ. Вĕсем нумай ачаллă çемьесенчи, инвалид ачасене пăхса ӳстерекен ашшĕ-амăшне çĕçлеме майсем туса парассипе, ачана 3 çула çитиччен пăхакан отпускри амăшĕсене ĕç тупса парассипе çыхăннă.

Çĕпе тивĕçтерекен центр умне лартнă задачăсене ăнăçлă татса парассишĕн пĕтĕм коллектив çине тăрса çĕçлет. Кунта вăй хуракансен профессионализм шайĕ те, ответлăх туйăмĕ те пысăк. Кулленхи çĕçпе коллектив патшалăх пулăшăвĕ парассин тĕнче стандарчĕсене тивĕçтерекен хальхи системăна туса хурас енĕпе çирĕппĕн утăмлани мана чăннипех те хăпартлантарать.

В. ШАПОШНИКОВ çырса илнĕ.

Саламлатпăр!

Хаклăран та хаклă мăшăра, юратнă аннене, тăвана – Мăн Шаптак ялĕнче пурăнакан **Татьяна Анатольевна ИЛЬИНАНА** 45 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Çирĕп сывлăхпа вăй-хал, тату пурнăçпа ăш пиллĕх сунатпăр. Телейпе ăнăçу яланах санпа пĕрле пулччăр, ĕмĕтӳсем çитсе пыччăр. Ачусен ырлăхне, телейне курса савăнмалла пултăр. Ĕмĕрӳ вăрăм пултăр, сывлăху çирĕп тăтăр.

Саламлаканĕсем: юратнă мăшăрĕ, виçĕ хĕрĕпе икĕ ывăлĕ тата çывăх тăванĕсем.

Юратнă мăшăра, аннене, асаннене – Анатри Панкли ялĕнче пурăнакан **Нина Егоровна ТРОФИМОВĂНА** 60 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн тата ăшшăн саламлатпăр, ăнăçу, ырлăх-сывлăх, вăрăм ĕмĕр сунатпăр. Малашне те мăшăрупа, ачусемпе, мăнукусемпе ырă курса савăнса пурăнмалла пултăр.

Саламмпа: мăшăрĕ, ывăлĕ, кинĕ, мăнукĕсем, хăтитăхлачи, пĕтĕм тăванĕсемпе хурăнташĕсем.

Юрпаш ялĕнче пурăнакан **Владимир Вячеславович ПЛАТОНОВ** ыран хăйĕн юбилейне паллă тăвать. Пирĕн юратнă та хаклă çыннăмăра çак ятпа чун-чĕререн саламлатпăр. Яланах сывлăхлă та хавас кăмăл-туйăмлă пулма сунатпăр. Телейпе ăнăçу санпа пĕрлех пулччăр, ĕмĕтӳсем çитсе пыччăр. Татах та нумай çул пурăнса пире савăнтарма Турри сана вăй-хăват патăр. Эпир сана юрататпăр, пире пулăшса тăнăшăн пуç тайса тав тăватпăр.

Ăшă саламмпа: ывăлĕсемпе кинĕсем, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, мăнукĕсемпе 1 кĕçĕн мăнукĕ.

Мĕн пурнăçлани чикĕ ан пултăр

Суту-илӳ

Мăн Сĕнтĕр райпо ĕçченĕсем район тата унăн тулашĕнчи халăх ыйтăвне туллин тивĕçтереççĕ: тавар хакĕсене вăтам шайра тытса тăраççĕ, сентресене тĕрлĕ таварпа çĕнетеççĕ, юсав ĕçĕсем туса лавккасене çĕнĕ сăнсăпат кĕртеççĕ. Вĕсен ĕçĕ-хĕлĕпе тĕплĕнрех паллашас тĕллевпе эпĕ Мăн Сĕнтĕр райпо канашĕн председательне Л.П. Майковăна калаçăва чĕнтĕм, ĕç кăтартăвĕсемпе тата малашнехи плансемпе паллаштарма ыйтрăм.

– Людмила Петровна, çулталăка та вĕçлерĕмĕр, 1 квартала та хыçа хăвартăмăр. Апла пулсан ĕç кăтартăвĕсем çинчен калаçмалли те пурах. Ĕçлес, пурăнас текен вара яланах малашлăхпа пурăнать, хăвăр ĕç-хĕлпе паллаштарăр-ха тархасшăн?

– Потребкооперацин пархатарлă тивĕçĕ – ял çыннисен пурнăçне çăмăллатма пулăшасси. Пирĕн ĕç коллективĕ пĕрлехи тăрăшулăхпа йывăрлăхсене çĕнтерсе умри тĕллевсене пурнăçларĕ, çакна ĕç кăтартăвĕ те çирĕплетет. Пĕрремĕш квартала вара япăх мар кăтартупа вĕçлерĕмĕр. Тавар çаврăнăшне палăрмаллах ӳстерме пултартăмăр, 124 процента çитертĕмĕр е çакă 60 миллион та 460 пин тенкĕ пулать, иртнĕ çулхи çак тапхăртинчен 12 миллион ытларах. Çак ӳсĕм вара çынсем тавар ытларах туяннипе кăна çыхăнман, хушма çĕнĕ суту-илӳ точкисем уçни те тавар çаврăнăш çине ырă витĕм кӳчĕ. Акă ял хуçалăх продукчĕсем сутакан лавккана, Шупуçĕнчи тата Мăн Хураçкари лавккасене çĕнетсе хута ятăмăр. Тренккăри куллен кирлĕ тавар лавккинче тĕплĕ юсав ĕçĕ ирттернĕ хыççăн «Союз» суту-илӳ центрĕ ĕçе пуçăнчĕ. Вĕсенчи ĕç условийĕсене лайăхлатрăмăр, çĕнĕ йышши оборудованисемпе пуянлатрăмăр. Пĕтĕмĕшле çĕнĕлĕх тавар çаврăнăшне хăпартма май пачĕ. Паянхи куна Мăн Сĕнтĕр райпо тытăмĕнче кооперативăн 26 участокĕ хăйсен ĕçне тĕрлĕ енлĕ пурнăçласа пырать. Ун тытăмĕнче 179 пайщик шутланса тăрать.

– Суту-илӳ точкисене самообслуживани мелĕ çине куçарассипе еплерех ĕçлесе пыратăр тата?

– Халĕ чылай лавккана самообслуживани мелĕ çине куçартăмăр. Маларах вара çак мел сутуçăсене те, тавар туянакансене те шиклентеретчĕ. Çак ĕç суту-илӳре питĕ меллĕ. Сентресем çине, сивĕтмĕш камерисене чĕркесе хунă, кăмăла кайнă тавара кĕске вăхăт хушшинчех суйласа илме пулать. Кирек епле тавар та куç умĕнчех. Лавккари тавар хисепĕ кăна мар, унти хăтлăхпа илемлĕх те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Иртнĕ çул суту-илӳ точкисене çĕнĕ сăн-сăпат кĕртме, унта юсав ĕçĕсем ирттерме 18 миллиона яхăн укçа-тенкĕ тăкаклама тиврĕ.

Паянхи рынок тапхăрĕнче кирек епле организаци те конкуренци çĕнтерме, ăна чăтса ирттерме пултармалла. Пирĕн вара лавккасене халăха тивĕçтерекен хакпа пуян ассортиментлă тавара кирлĕ чухлĕ кӳрсе килмелле. Туянакан вăл е ку тавара ытти çĕрте шыраса ан хăшкăлтăр.

– Сирĕн çăкăр завочĕ пĕçерсе хатĕрленĕ çăкăр-булка изделийĕсене кирек хăш лавккара та курма пулать, халăх хапăл туса йышăнать.

– Çăкăр завочĕ пысăк тупăшпа ĕçлет. Иртнĕ çул 34 миллион та 470 пин тенкĕлĕх çăкăр-булка изделийĕ туса кăларчĕ. Лимонад тăвассине те планпа пăхнинчен ӳстернĕ. Туянакан ыйтăвне тĕпе хурса ассортимента тăтăш пуянлатать. Кунта хатĕрленĕ продукцие тĕрлĕ курава илсе тухаççĕ, ăна туянакан умне ытларах кăларас тĕллевпе республика тулашĕнчи представительсемпе, предпринимательсемпе килĕшӳсем тăваççĕ. Паянхи кун тĕлне 85 килĕшӳ тунă. Пĕтĕмпе туслă коллектив 17 мероприятие хутшăннă. Кунта хатĕрленĕ макарон изделийĕсене те хапăл туса йышăнаççĕ, вĕсен пахалăхĕ пысăк фабрикăрисенчен пĕрре те кая мар. Иртнĕ çул 34 тонна макарон изделийĕ туса хатĕрленĕ. Çавăн пекех 1 миллион та 28 пин тенкĕлĕх техника оборудованийĕ вырнаçтарчĕç. «Поиск-240/02» маркăллă çут çанталăк газĕпе ĕçлекен 240 çăкăр пĕçермелли форма вырнаçакан хуран пĕр çулта 350 – 380 пин тенкĕ укçа перекетлеме май парать. Çăкăр заводĕнче 75 ĕçчен вăй хурать, вăтам ĕç укçи 10098 тенкĕпе танлашать.

– Кăçалхи хĕл кунĕ выльăх апачĕ енĕпе ял çыннине йывăрлăх кăларса тăратрĕ, ку енĕпе эсир халăха мĕнле пулăшма пултартăр?

– Халăх ыйтнине кура ытти тăрăхран утă, улăм чылай кӳрсе килетпĕр, çынсем ыйтсан вара хушма хуçалăхах çитерсе паратпăр. Çавăн пекех 20 тонна ытла тырă хывăхĕ, 5 тонна ытла комбикорм, 43 тонна ытла тĕш тырă кӳрсе килтĕмĕр, тĕрлĕ сортлă çĕр улмие 60 тонна ытла турттартăмăр. Ку енĕпе малашне те çине тăрсах ĕçлĕпĕр. Акă юлашки вăхăтра халăх вăрлăхлăх çĕр улми чылай ыйтать. Çӳлерех асăннă пур продукт та лавккасенче çителĕклĕ. Выльăх-чĕрлĕх тытакансем райпо тытăмĕ йывăрлăхра алă тăсса панишĕн кăмăллă пулнине палăртаççĕ.

Юлашки вăхăтра хатĕрлев пĕлтерĕшĕ чылай ӳсрĕ. Çакă ял çыннин пурнăç пахалăхне лайăхлатма пулăшать. Çавăнпа халăхран тĕрлĕ чĕр тавар, пахча çимĕç, какай, сĕт, ытти продукцие, эмел курăкĕсем пухассине анлăлатса пыма тăрăшаççĕ.

– Сентресем çинчи тавар хакĕсене тĕрлĕ тĕслĕ хутпа çырса çыпăçтарнă, мĕне пĕлтереççĕ-ха вĕсем?

– Лавккана кирек епле çын кĕрсен те сентре çинче мĕнле тавар вырнаçтарнине пĕлтерĕшне кура пĕр чăрмавсăрах уйăрса илме пултартăр. Сарă тĕспе социаллă пĕлтерĕшлĕ таварсен, симĕс тĕспе хамăр республикăра туса кăларнисен хакĕсене палăртнă. Социаллă пĕлтерĕшлĕ таварсен хакĕсене контроллесе тăрасси тĕп ĕçсенчен пĕри пулса тăрать. Çăкăр-булка изделийĕсен хакĕсене пĕр шайрах тытса тăратпăр. Социаллă пĕлтерĕшлĕ таварсем сутлăхра 20 процент ытларах йышăнаççĕ. Вăл таварсен хакĕсене чи пĕчĕк шайра йĕркелетпĕр. Çынсем вăл е ку тавара туянма пултараслăхĕ пирĕншĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ. Президент хушăвне тĕпе хурса халăх умне Чăваш Енре туса кăларнă продукцие ытларах та ытларах кăларма тăрăшатпăр. Етĕрнери тата Вăрнарти аш-какай комбиначĕсемпе тӳрременех ĕçлетпĕр, çакă халăха пысăк пахалăхлă тавар сĕнме май парать.

– Пирĕн район яллă территори, çавна май ял çыннин тăтăшах çурт-йĕре çĕнетме тивет. Ку енĕпе эсир халăха пулăшма пултаратăр-и?

– Райпо ĕçĕ-хĕлĕ ял çыннин пурнăçĕпе тачă çыхăннă. Çавна май çуртйĕр çĕклемелли материала кредит мелĕпе сĕнетпĕр. Унсăр пуçне теле- тата видеоаппаратурăна та кредитла туянакансем пур. Паллах, çакă халăхшăн питĕ меллĕ.

– Райпо тытăмĕнче обществăлла апатлану предприятийĕсем туллин ĕçлесе пыни куç кĕрет, халăх йышлă çӳрет, вĕсен ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарăр-ха тата?

– Пĕтĕмĕшле илсен ку предприятисен ĕç-хĕлне тĕпрен улăштартăмăр, çĕнĕ йышши оборудовани вырнаçтартăмăр, хальхи йышши юсав ĕçĕсем туса ирттертĕмĕр. Ĕçе çĕнĕлле йĕркелени кĕске вăхăт хушшинче пысăк пахалăхлă апат-çимĕç хатĕрлеме тата тупăша ӳстерме май парать.

– Сирĕн ĕç-хĕле тишкернĕ май коллектив малаллах талпăнни куç кĕрет. Кунта тăрăшакансен шухăш-кăмăлĕ еплерех-ха?

– Çыннăн ĕç вырăнĕ пулсан тата тивĕçлĕ ĕç укçи тӳлесен пурнăç та малаллах пырать. Çавăнпа та эпир ĕçлекен çынна хавхалантарма тăрăшатпăр. Хальлĕхе ĕç вырăнĕсем кĕскетнĕ тĕслĕхсем пулманха. Вăтам ĕç укçи калăпăшĕ 12 пине яхăн.

– Паянхи пурнăç тăтăш çĕнĕлĕхсем тума хистет...

– Çапла, малашнехи пурнăçра çĕнĕлĕхсемсĕр май çук. Пысăк коллектива ертсе пынă май тăтăш шыравра пулма тивет. Çынсем ыйтнине тĕпе хурса 2 – 3 çĕнĕ лавкка çĕклеме палăртатпăр.

Паянхи кун тĕлне пирĕн райпо тытăмĕнче повар, сутуçă, кондитер валли ĕç вырăнĕсем пур, кăмăл тăвакансене эпир хамăр пата ĕçлеме йыхравлатпăр. Çавăн пекех çӳлерех асăннă специальноçсене алла илме тӳлевсĕр вĕренме яратпăр, пĕлӳ илнĕ хыççăн вара пирĕн пата ĕçлеме килмелле.

Р. ИЛЛАРИОНОВА
калаçнă.

Сăн ӳкерчĕкре: Л.Н. Мишкина тин кăна пиçсе тухнă техĕмлĕ çăкăрпа.
Автор сăн ӳкерчĕкĕ.

Ыр кăмăллăх

Май пуррипе пулăшма тăрăшăр

«Ударник» хуçалăхăн тĕп усадьбинче Йӳçкасси ялĕнче Христос Çӳле çĕкленнин чиркĕвĕн çурчĕ мăнаçлăн ялкăшса таврана илем кӳме тытăнчĕ. Кăçалхи июнĕн 2-мĕшĕ тĕлне вара аслă праçнике хисеп туса чиркӳре алтарь уçма палăртнă. Пысăк служба пулмалла.

Юлашки виçĕ çул хушшинче чиркӳ хута ярассипе сахал мар ĕç туса ирттернĕ. Çапах та тумалли ĕçсен калăпăшĕ те пĕчĕк мар. Ăшă, газ, шыв, электричество кĕртмелле, алтарьпе иконостас тумалла, урай-мачча, чӳречеалăк таврашĕсене йĕркене кĕртсе пĕтермелле, чансем туянмалла, тул енчен тата шалтан сăрламалла, йĕри-тавра тирпей-илем кĕртмелле.

Хаклă пиччесемпе аппасем, шăллăмсемпе йăмăксем! Ыр кăмăллă пулар. Çакăн пек мероприятисемпе пулăмсенчен пăрăнар мар. Пĕрлехи кĕлĕ çуртне туса пĕтерессинче кам мĕнпе пултарнă таран пулăшма тăрăшар: укçа-тенкĕпе те, строительство материалĕсемпе те, харпăр хăй ĕçлесе парса та. Пысăк нимене хутшăнар. Ырă тума васкар. Пророк сăмахĕсене нихăçан та манар мар: «Параканăн алли нихăçан та чухăнланмасть».

Христос çӳле çĕкленнин кунĕнче чиркӳре служба ирттернĕ çĕре сире ырă сунса кĕтетпĕр. Турă сыхлатăр пурсăра та.

Адресĕ: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Юськасы, ул. Центральная, д. 60, местная религиозная организация «Православный Приход храма Вознесения Господня» с. Юськасы Моргаушского района ЧР. ИНН 2112390480, КПП 211201001, р/с 40703810811100000015, Чувашский РФ ОАО «Россельхозбанк» г. Чебоксары, БИК 049706752, кор/с 30101810600000000752.

Йӳçкасси чиркĕвĕн прихут канашĕ.

«Детский Интернет»: сомнительным сайтам – твердое нет!

Дети исследуют Интернет с тем же любопытством, с которым они открывают мир. SMS-чаты, игры, социальные сети – это далеко не полный список любимейших способов общения современных детей. Привычным стал и процесс дистанционного получения образования: Всемирная сеть в школе и дома стала полноценным источником знаний. Но вся ли информация, размещенная в глобальной сети, нужна вашему ребенку?

Простое решение этой сложной проблемы предложила компания «МегаФон». Новый тарифный план «Детский Интернет +» создан специально для защиты от просмотра так называемых «вредных» сайтов. Он делает общение комфортным и одновременно ограждает ребенка от информации сомнительного содержания.

Галина Маркова, технолог:

- Как только узнала о новом тарифе «МегаФона», сразу подключила на него дочку. Кристине 13 лет, и она уже активный пользователь Интернета. Этой весной мы начали готовиться к научно-практической конференции по истории и часто искали нужную информацию в Сети. И как же мне бывало стыдно, когда в разгар поиска вдруг всплывали «окна» из порносайтов! Теперь я спокойна: дочка может пользоваться Интернетом и в мое отсутствие - «МегаФон» решил нашу проблему!

Оксана Замятина, менеджер:

- Впервые стали использовать мобильный Интернет, подключив к нему брата-школьника. Из тарифных планов выбрали «Детский Интернет +». Привлекает неограниченный internet-трафик: можно качать любимые фильмы и видеоролики, просматривать почту, выходить на форумы. А для брата, конечно, важен «фильтр», защищающий от «нехороших» сайтов в Интернете.

Ирина Минликеева, химик:

- Раньше дочь была подключена к другому оператору, и мы просто устали от шквала «развлекательных» SMS, которые сыпались на ребенка круглосуточно! Выбрав «Детский Интернет +» от «МегаФона», мы решили многие проблемы. А самое главное, что ребенок может спокойно выходить в Интернет, не боясь наткнуться на что-то шокирующее и сомнительное. Мобильный Интернет часто выручает дочь на контрольных: можно быстро найти ответ на каверзные вопросы.

«Детский Интернет +»:

* стоимость подключения – 750 рублей
* комплект, включающий 3G-модем, тарифный план «Детский Интернет+» и 3 месяца пользования неограниченным интернет-трафиком, стоит 999 рублей
* абонентская плата за пользование тарифом – 250 рублей (начинает действовать с четвертого месяца обслуживания)
* автоматически подключена услуга «Запрет отправки развлекательных SMS».

Филиал «Моргаушимежрайгаз» ОАО «Чувашсетьгаз»

Соблюдайте Правила охраны газораспределительных сетей!

Вниманию глав сельских поселений, руководителей сельскохозяйственных и промышленных предприятий, фермерских и арендных хозяйств, частных лиц и других землепользователей, а также руководителей подрядных организаций.

По территории населенных пунктов Моргаушского района и за пределами поселений проходят подземные газопроводы, обозначенные железобетонными столбиками и опознавательными знаками, нанесенными на постоянные ориентиры.

Если Вы собираетесь производить какие-либо строительные или земляные работы, то до начала выясните: не проходят ли на этом участке подземные газопроводы.

В охранных зонах распределительных газопроводов без письменного согласия филиала «Моргаушимежрайгаз» ОАО «Чувашсетьгаз» запрещется:

- Обработка почвы на глубину более 0,3 метра;

- Любые работы, связанные вскрытием сетей;

- Строительно-монтажные работы с применением строительной техники.

При необходимости выполнения работ в охранной зоне газораспределительных сетей вы обязаны:

- письменно согласовать предстоящие работы с филиалом «Моргаушимежрайгаз» ОАО «Чувашсетьгаз» и получить в райадминистрации ордер (разрешение) на производство земляных работ;

- не менее чем за 3 рабочих дня до начала работ пригласить представителя филиала «Моргаушимежрайгаз» на место производства работ для указания по технической документации трассы газопровода и мест шурфования (для определения точного местонахождения газопровода);

- за сутки до начала работ сообщить телефонограммой в филиал «Моргаушимежрайгаз» о дне и часе производства работ, при выполнении которых необходимо присутствие эксплуатирующей организации;

- не допускать к работе в охранной зоне газораспределительных сетей применение механизмов и ударных инструментов.

Для исключения случаев причинения ущерба нашему предприятию и неприятностей себе по его возмещению соблюдайте Правила охраны газораспределительных сетей и условия производства работ в пределах охранных зон газораспределительных сетей.

Должностные лица и граждане, виновные в нарушении требований перечисленных выше Правил, а также функционирования газораспределительных сетей, привлекаются к ответственности в порядке, установленном законодательством Российской Федерации.

По всем вопросам, касающимся производства земляных работ вблизи подземного газопровода, следует обращаться по адресу: **д. Ландыши, Филиал «Моргаушимежрайгаз» ОАО «Чувашсетьгаз». Телефоны: 60-2-24, 60-2-25.**

Кил тата хушма хуçалăх

Пĕлни пăсмасть

Помидора, пăрăça, петрушкăна вăрлăхлăх çитĕнтерес тесен вĕсене уйăх Скорпион паллинче чухне акмалла;
Çĕнĕ уйăх чухне çĕрпе ўсен-тăрана тытма хушмаççĕ;
Минераллă удобрение уйăх тулнă вăхăтра сапмалла.

«Хĕвел ăшши пĕр вырăнта лартмасть»

Ял çыннипе калаçатпăр



АВТОРТАН. Çўлтен çўле хăпаракан хĕвел ăшшипе юр васкаса ирĕлет. Хĕл ыйхинчен вăранакан уйхирсемпе пахча-анкартисем хресчене хăйсем патне йыхравлаççĕ. Умра – черетлĕ çур аки. Кайăк юррипе тулса пыракан ăшă кун. Чăваш Республикин Ял хуçалăх министерствин хурт-хăмăр агентствин Муркаш районĕнчи хатĕрлев кантурĕнче 62 çулхи арçынпа тĕл пултăм. Хатĕрлевçĕ зоотехник П. Семенова паллаштарнă тăрăх ку вăл Муркаш енпе тачă çыхăнура ĕçлекен утарçă, ĕçне ăста пĕлекен пахчаçă Александр Порфирьевич ЯШТЫКОВ. Ирттернĕ калаçу вулакансемшĕн те кăсăклă пуласса шанса унпа паллашма сĕнетĕп.

– Полина Витальевна паллаштарнă тăрăх эсир пирĕн районсем мар, анчах Муркаш енпе тачă çыхăну тытса ĕçлетĕр. Мĕнре çак çыхăну вăрттăнлăхĕ?

– Эпĕ Çармăс Республикин Туçи районĕнчи Кузнецово салинче çуралса ўснĕ. Паян та хамăн килти хушма хуçалăха унтах тытса пыратăп. Анчах манăн хамăрăн калаçава инçет вырăнсемпе çыхăнтарас килмест. Çĕнĕ Шупашкарти химии промышленноçĕнче 28 çул вăй хунă май эпĕ унтах хваттер илтĕм. Çакна шутласан халĕ эпĕ Чăваш Республикин çынни. 50 çулта тивĕçлĕ канăва тухсан атте-анне килне таврăнса хушма хуçалăха аталантарма пуçларăм. Паян манăн хамăн хурт-хăмăр, сад, пахча. Вĕлле хурчĕ ĕрчетме пуçласан хурт-хăмăр агентствин сирĕн районти хатĕрлев пункчĕпе çыхăну йĕркелерĕм. Килĕшет мана кунта. Полина Витальевна хатĕрлевçĕ зоотехник та пирĕн ыйтусене вăхăтра татса парассишĕн тимлет. Вăхăт перекетлекен утарçăшăн урăх мĕн кирлĕ. Çапла вара нумай çул Муркаша киле çўренĕ пек çўретĕп.

– Утарçă пулма çăмăл мар пулĕ?

– Çăмăллăх ĕçлесен çеç пулать. Çакна ăнланса эпĕ иртен пуçласа таврана каç сĕмĕ пусичченех пахчара. Паян вĕллесене юртан тасататăп, чечексем лартнă вырăнсене юртан уçатăп, кĕрхи культурăсем епле хĕл каçнипе интересленетĕп. Кунпа пĕрлех çурхи пахчари ĕçсен планне йĕркелетĕп. Пĕр сăмахпа каласан хĕвел ăшши пĕр вырăнта лартмасть.

Яла пурăнма таврăнсан çĕр ĕçченĕн тăрăшулăхне çăмăллăх кўрес тесе пыл хурчĕсем ĕрчетме шутларăм. Çак ĕçченсем мар-и-ха ўсен-тăрана шăркалантараççĕ, пулас тухăç никĕсне хываççĕ? Ку ĕмĕтпе эпĕ хамăн хуçалăха пыл хурчĕ илсе килтĕм. Тĕрĕс утăм турăм тесе шутлатăп. Паян манăн утарта 20 яхăн вĕлле. Çу кунĕсенче вĕсем тулли хăватпа ĕçлеччĕр тесен утарçăн Турă кайăкĕсене тирпейлĕ хĕле кĕртмелле, перекетлĕ хĕл каçармалла, технологие пăхăнса çава кăлармалла. Çак ĕçсемшĕн кашниншĕнех ответлăха туйса эпĕ пĕр ĕçе те ыранхи куна хăвармастăп. Çултан-çул çапла. Çавăнпах ĕнтĕ пĕлтĕрхи шăрăх çу кунĕсенче те вĕлле пуçне 45 килограма яхăн пыл илме мехел çитертĕм. Тавах Турă кайăкĕсене манăн ĕçĕме шута хунăшăн.

– Тав туни лайăх та-ха, анчах утарçăн ĕçĕхĕлĕ нумай енлĕ. Кашнин хăйĕн йĕрки пур, çапла вĕт?

– Манăн кун йĕркинче ĕç дневникĕ çырса пырасси тĕп вырăнта. Унти кăтартусене пăхса умри тĕллевсене палăртатăп, çанталăк условийĕсем епле пулассипе кăсăкланатăп. Кунпа пĕрлех иртнĕ ĕçсене çырса пыни çĕннисене йĕркелеме, тунă йăнăшсенчен пăрăнса иртме пулăшать. Утарçăсем вĕллесене контроллĕ виçев туни практикăра вăрттăнлăх мар. Çак кăтартусене те тăтăш çырса пыни вĕллери хуртсем епле пурăннипе интересленме пулăшать. Хăш çемье вăйсăрланнă, камăн пыл хушăннă, вĕлле хурчĕсем мĕнле культура çинчен ытларах пыл пуçтарчĕç, унченхи çулсенчи кăтартусем еплерех, мĕн кĕтме пулать т. ыт. те. Çырса пынă кăтартусенчен ятарлă график тăватăп та хăш вăхăтра тата мĕнле культура çинчен Турă кайăкĕсем ытларах пыл пуçтарни алă тупанĕ çинчи пекех куç умне тухать.

– Сирĕн графика пăхсан утарсем таврашĕнче пыл илмелли культурăсене хăçан акмалли те яр уççăн курăнать.

– Тĕрĕс асăхарăр. Тĕрĕслевлĕ виçевсене шута хурса тунă графикпа çĕртме уйăхĕнче вĕлле хурчĕсем пыл илеймесĕр аптăраççĕ. Утарсем çывăхĕнче шăп çак вăхăтра çурăлакан фацели, шурă горчица, хăяр курăкĕ аксан ку тапхăрта пыл илесси уксахланинчен пăрăнса иртме пулать. Ку культурăсене ака уйăхĕн вĕçĕнче акмалла. Вĕсем 35-40 кунтан çурăлаççĕ, пыл хурчĕсене ĕçлемелли чи меллĕ вырăнсем пулса тăраççĕ. Хамăн дневникра эпĕ сывлăш температурине, кун пĕлĕтлĕ е уяр пулнине, çумăр çунипе çуманнине те çырса пыратăп. Мĕн чуль нўрĕк ўкнине, хăш культурăна нўрĕк мĕнле кирлине паллă туни те пахчари ĕçсене йĕркелесе пыма пулăшать.

– Халĕ каланине эсир хăвăр пахчара тытса пыратăр-и?

– Урăхла пулма та пултараймасть. Çыннсене те çавнах сĕнетĕп. 60 сотка çĕр çинче манăн фацели те, шурă горчица та, хăяр курăкĕ те ўсеççĕ. Вĕсем вĕлле хурчĕсемшĕн пыл пухмалли çук вăхăтра питĕ меллĕ. Çавăнпа та манăн вĕллесем нихăш çул та пылсăр лармаççĕ.

– Эсир пахчари çĕре пĕрре те сухалаттарман тетĕр. Мĕнле йĕркелетĕр-ха хăвăрăн çĕр ĕçне?

– Кунта ял çынни çĕр ĕçне епле юратни малта тăрать тесе шутлатăп эпĕ. Çапла, манăн пахчана 1992 çултанпа трактор кĕрсе суха туман. Анчах çак хушăра эпĕ тупăш илессипе те намăс курман. Пахчари ĕçсене пĕтĕмпех алăпа тăватăп. Йăрансене кĕркунне çулçăсемпе, тислĕкпе, курăкпа, тĕрлĕ çеçкĕпе самай хулăн витсе хуратăп. Кĕрхи çумăрсемпе унта ăмансем самай ĕçлеççĕ, хунă органикăна çĕре кĕртсе гумус виçине ўстереççĕ. Çуркунне те çав тĕлте ăмансем маларах ĕçлеме пуçлаççĕ. Эпĕ вара йăран çинчи тислĕк хутăшне тураса илсе йăрансем хушшине хуратăп. Тасалнă йăрана çивĕч кĕреплепе тарăннăн (9-10 см) кăпкалататăп. Кĕреçепе пусмасăрах пахча çимĕç лартма йăран хатĕр те. Çумсене те алăпа çумламастăп, хам тунă алăпа ĕçлемелли плоскорезпа касатăп. Ăна хулăн пралука мăлатукпа çапса çўхетсе хатĕрлерĕм. Пахчаçăшăн питĕ меллĕ ĕç хатĕрĕ пулса тăчĕ. Куратăр вĕт, пахчаран тупăш илме нумай ĕçлемелле.

– Сирĕн сăнавсемпе кăçал хресчен хăçан çурхи ака-суха ĕçне пуçăнасси пирки калама пулать-и?

– Пултаратăп. Манăн пахчара юр хулăнăшне виçмелли линейка ларать. Ăна пăхса пынипе юлашки кунсенче юр талăксерен 3-4 сантиметр ирĕлчĕ. Кун пек хăвăртлăхпа пырсан Мăн кун эрнинче уй-хирте юр юлмасть. Çĕр-шыв типме пĕр эрне вăхăт иртсен те çу уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне хресченĕн хире тухма хатĕр пулмалла. Тўрлетсе калатăп, çанталăк паянхи пек пулсан.

– Вĕлле хурчĕсем патнех таврăнар-ха. Пĕр вĕллере мĕн чуль-ха çак ĕçченсем?

– Пĕр килограмм çыхăра вăтамран 10000 вĕлле хурчĕ. Лайăх пăхнă вĕлле хурчĕн çемйи çу кунĕсенче 6 килограмм таять. Ку вăл 60000 вĕлле хурчĕ. Вĕсене пыл илмелли хушма лаптăксем акса памасăр тулли хăватпа ĕçлеттерме çук. Çакна çур акине тухакан çĕр ĕçченĕн шута илесчĕ. Çавăн чух çеç кĕр кунĕсенче ял çыннин сĕтелĕ пыл чейĕнчен катăк пулмĕ.

А. БЕЛОВ калаçнă.

Пахчаçă валли

2011 çулта пахча çимĕç акмалли-лартмалли уйăх календарĕ

Культурăсем	Ака	Çу	Çĕртме	Утă	Çурла	Авăн	Юпа
Хăяр	–	9, 10	5, 6, 14, 15	–	–	–	–
Кавăн, кабачки, патиссон	–	9, 10	5, 6, 14, 15	–	–	–	–
Пăрça	–	9, 10 –	– –	–	–		
Фасоль	12, 13	9, 10	5, 6,14, 15	–	–	–	–
Салат	10,11	7, 8, 15	3, 4, 12, 13	9, 10	5, 6	–	–
Укроп	10, 11	7, 8, 15	3, 4, 12, 13	9, 10	5, 6	–	–
Купăста	10, 11	7, 8, 15	–	–	–	–	–
Петрушка, сельдерей	10, 11	7, 8	–	–	–	–	8, 9
Шăлсăр сухан	10, 11	7, 8	–	–	–	–	–
Чечек-купăста, брокколи	7, 8, 9, 16	4, 5, 6, 13, 14	10, 11	–	–	–	–
Чечексем	7, 8, 9, 16	4, 5, 6, 13, 14	10, 11	–	–	–	–
Кишĕр	22, 23	20, 21, 29-31	–	–	–	–	13, 14, 22
Хĕрлĕ кăшман	22, 23	20, 21, 29-31	–	–	–	–	–
Тымарлăх петрушка	22, 23	20, 21, 29-31	–	–	–	–	13, 14, 22
Çарăк	22, 23	20, 21, 29-31	–	–	–	–	–
Редис	22, 23	20, 21, 29-31	–	–	19, 20, 21	–	–
Шăллă сухан	22, 23	20, 21, 29-31	–	–	–	–	–
Çурхи ыхра	22, 23	20, 21	–	–	–	–	–
Кĕрхи ыхра	–	–	–	–	–	15-17	13, 14, 22
Çĕр улми лартасси	22, 23	20, 21, 29-31	–	–	–	–	–
Çĕр çырли	–	7, 8, 15	–	–	5, 6	1-3	–
Хăмла çырли	–	7, 8, 15	–	–	5, 6	1-3	–
Акма юрăхсăр кунсем	18	3, 17	2, 16;	1, 15, 30;	13, 29;	12, 27;	12, 26

Сана валли, ял çынни!

Шупашкар хулипе пирĕн район администрацийĕ хушшинчи туслă çыхăну аталансах пырать. Хула çыннисене ял хуçалăхĕн паха продукцийĕпе тивĕçтерес тĕллевпе Шупашкарта ака уйăхĕн 15-мĕшĕнчен «Çуркунне – 2011» суту-илў уйăхлăхĕ пуçланчĕ. Унта хутшăнас текенсем 324-мĕш стрелковăй дивизи ячĕллĕ урамăн 22-мĕш çурчĕ тĕлĕнчи «Дар» пасар территорийĕнче, «Эверест» пасарта (Марпосадское шоссе, 32), Николаев урамĕнчи 14а адреспа вырнаçнă ял хуçалăх пасарĕнче, МТВ-центрта, «Северная» ярмăркка́ра тўлевсĕр вырăнсемпе усă курма пултараççĕ. Ыйтса пĕлмелли телефонĕ: 23-44-17.

Хамăр инф.

Çурхи ĕçсем чĕнеççĕ

Ырана ан хăварăр

Кун вăрăмланса, хĕвел ăшши вăйланса пынă май юр хулăнăшĕ куç умĕнчех чакать. Савăк кайăк-кĕшĕк çур аки çывхарни пирки савăнса хыпарлать. Çут çанталăк хĕл ыйхинчен чĕрĕлнĕ май малашлăх ĕмĕтсене тĕвĕлемелли вăхăт. Çавăнпа та килти хушма хуçалăха тытса пыракансене ырана хăвармасăр пурнăçламалли ĕçсем пирки паян манăн çакнашкал сĕнўсем парас килет. Ăна валли çĕр ĕçĕнчи хамăн пуян опыттпа усă куратăп. Хама пĕлекенсем çакна ăнланасса, манăн сĕнўсем усăллă пуласса шанатăп.

– Юр кайсанах кĕркунне лартса хăварнă ыхра йăранне кăпкалатса мочевинăпа (10 литр шыва 1 кашăк) апатлантармалла.

– Кая юлса пулакан купăста сортне паянах калчалăх акни вырăнлă.

– Шăтнă калчасене сиенлĕ хурт-кăпшанкăран им-çампа пĕрĕхмелле.

– Юртан уçăлнă йăрансене пленкăпа витмелле. Çапла тусан çум курăк хăвăртрах шăтса тухать. Пахча çимĕç лартмалли вăхăт çитсен вĕсене çăмăллăнах тăпăлтарса пăрахма май пур.

– Апрельтех нумай çул ўсекен пахча çимĕç культурисене пăхмалла. Ревень, кăшкар ути, хĕрен ўсекен вырăнсене кăпкалатмалла, кали удобренийĕпе апатлантармалла.

– Апрель вĕçĕнче йăрансем çине кишĕр, петрушка, çарăк, укроп, салат, редис вăррисене акма, сухан лартма юрать.

– Уйăх вĕçленнĕ тĕле дыньăпа арбуз вăррисене те калча тума акаççĕ.

Л. ФАДЕЕВ, агроном.

Тавралăх илемĕ хамăр алăра

Тирпейлĕрех пуласчĕ

Район хаçатĕнче «Кил тата хушма хуçалăх» кăларăма çул панине ырлатăп. Çакăнти калаçава анлăлатас тесе эпĕ паян тăван тавралăх илемĕ пирки сăмах пуçлас терĕм. Килти хушма хуçалăхпа тăван тавралăх яланах тачă çыхăнура аталанса пынă. Пĕрне тепринсĕр курма çук та.

Манăн паянхи сăмахăм Ильинкăри аксакалюман пирки. Çут çанталăкăн çак палăкĕ хамăр районта пулнишĕн эпир питĕ савăнатпăр. Тăван тавралăха юратсан çут çанталăк пуянлăхĕ хушăнса пынине çирĕплетет çак юман. Анчах...

400 çул урлă каçнă çак палăк хăйĕн асамлăхĕпе туртать. Çакна «ăнланнисем» юман патĕнче пулсан ун çумне тăрса сăн ўкерттернисĕр пуçне юман вуллине тĕрлĕ «çырусем» чикессине те хăйсен «ĕçĕ» тесе шутлаççĕ. Çапла туса тата чĕрĕ палăк патне пырсах таптаса юман таврашĕнчи çĕре хытарса лартнă вĕсем. Тĕллĕн-тĕллĕн юманăн тымаррисем те çĕртен тухса кайнăччĕ. Хамăр тавралăх пуянлăхĕ çине çапла пăхсан ăна çухатасси те инçе мар.

Иртнĕ çулла унта пулса курнă чух тăван тавралăха юратакансем юман-палăк патне вăрман тăпри турттарса пынине курсан чун савăнчĕ. Пĕрлехи тăрăшулăха тўпе хывма эпир те юман-палăк таврашĕнчи çўп-çапа пуçтартăмăр. Пĕччен сурни типсех пырать, халăх сурать – кўлĕ пулать. Çак чăнлăхпа пурăнса çут çанталăк палăкне те упраса хăварасчĕ.

О. МИХАЙЛОВА, Муркашри вăтам шкулти вĕрентекен.

«Эпир санпа – педагогсем, мĕн кăна пĕлместпĕр пулĕ!»

Çак ятпа районти вĕрентӳ учрежденийĕсенчи хушма пĕлӳ паракан педагогсен конкурсĕ иртрĕ. Финала тухнă кашни педагог хăйĕн ĕçĕ пурнăçра мĕнле вырăн йышăннипе, ĕçри вăрттăнлăхĕсемпе тата пултарулăхĕпе паллаштарчĕ.

И.В. Киршева, Т.А. Ершова, Н.В. Борзаева, С.А. Каликов, А.Г. Семенов, А.В. Васильева тата Е.С. Шумилова педагогсене тĕрлĕ номинацире палăртрĕç. Районти ача-пăча пултарулăх çуртĕнче вăй хуракан Людмила Александровна Митрофанова конкурс çĕнтерӳçи пулма тивĕçрĕ.

Сăмах май апрелĕн 8-10-мĕшĕсенче Людмила Александровна хăйĕн воспитанникĕсемпе Йошкар-Ола хулинче иртнĕ пултарулăх конкурсне çитсе килчĕ. Вăл ертсе пыракан «Вдохновение» хореографи коллективĕ «Ан кай, кайăк» тата «Калинка» илемлетнĕ халăх ташшисемпе хăйĕн çуллĕ шайри ăсталăхне тепĕр хут çирĕплетсе пачĕ.

А. РОЖКОВА,
районти ача-пăча пултарулăх çурчĕн директорĕ.

Чиркӳ уявĕсем

Вырсарни кун – Кăчкă праçникĕ

Евангелире çырнă тăрăх Иисус Христос çак кун çамрăк ашак çинче ларса Иерусалим хапхинчен кĕнĕ. Ăна вара халăх хапăл туса пальма турачĕсемпе кĕтсе илнĕ. Çак туратсене çынсем Иисус пыракан çул çине хурса тухнă, ăна сума суса юрланă...

Çак уява христианство чиркĕвĕ 4-мĕш ĕмĕрте паллă тума тытăннă. Вырăссем хушшинче вара Кăчкă праçникĕ иртнĕ ĕмĕрте çеç тĕпленнĕ.

Кăчкă праçникĕ – çуркуннехи чи илемлĕ, пурне те килĕшекен уяв. Мĕн авалтанпах кăчкă тураттине сĕртĕнекенсем, тытакансем сывлăхлă пулаççĕ тесе каланă. Çак йывăç çынна вăй, тасалăх, чун илемне парнелет тенĕ.

Чиркӳрен илсе килнĕ кăчкă тураттисене тӳрех курăнмалла хуман. Вĕсене иконăсем хыçне хунă. Пĕр-икĕ туратне выльăх усранă витене те тирнĕ. Кăчкă турачĕсем сиплĕ тесе каласçĕ. Ĕлĕкрех чиркӳрен тасатса илсе килнĕ кăчкă турачĕн папакĕсене ача çуратма пултарайман хĕрарăмсене те çиме хушнă. Вырăс ялĕсенче ачасене, вĕсем çирĕп сывлăхлă ӳсчĕр тесе, çав туратсемпе «хĕнесе» илнĕ. Выльăх-чĕрлĕх хунатăр, ан чирлетĕр тесе вара чиркӳрен илсе таврăннă темиçе кăчкă тураттине апатпа пĕрле çитернĕ.

Спорт

Шашкăлла выляса ăмăртрĕç

Иртнĕ шăмат кун район администрацийĕн методика пӳлĕмĕнче ял хуçалăх предприятийĕсен, организацисемпе учрежденисен тата ял тăрăхĕсен командисем шашкăлла выляма пуçтарăнчĕç. Ăмăрту ĕç коллективĕсен спартакиади шучĕпе иртрĕ.

Командăсем хушшинче 1-мĕш вырăнта «Оринино» хуçалăхăн команди пулчĕ. Хыççăнхи вырăнсенче – «Ударник» хуçалăхăн тата районти тĕп больницăн командисем.

Чи вăйлă вылякан 10 çын финала тухрĕ. Кунта кашни хăйĕншĕн выляса район чемпионĕн ятне çĕнсе илес тесе тăрăшрĕ. Спорт маçтăрĕн кандидачĕ Александр Ермолаев чемпион ятне кăçалхипе пиллĕкмĕш хут тивĕçрĕ. Вăл 8,5 очко пухма пултарчĕ. 2-мĕш вырăнта – Алексей Прокопьев («Оринино»), 3-мĕш вырăнта – Леонид Андреев (больница).

А. АЛЕКСАНДРОВ.

Арçынсене чĕнеççĕ

Апрелĕн 23-мĕшĕнче «МСО «Моргаушская» акционерсен хупă пĕрлешĕвĕ арçынсене ăмăртăва йыхравлать. «Нечерноземагропромстройăн» Хисеплĕ строительне Н.А. Гусака халалласа тата «МСО «Моргаушская» акционерсен хупă пĕрлешĕвĕн куçса çӳрекен кубокне çĕнсе илессишĕн волейбол ăмăртăвĕ иртет. Унта районти предприятисемпе организацисен, учрежденисен командисене чĕнеççĕ. Тĕп услови – вылякансем Муркаш районĕнче пурăнни е кунта çуралса ӳсни.

Ăмăрту «МСО «Моргаушская» акционерсен хупă пĕрлешĕвĕн спортзалĕнче 10 сехетре пуçланать. Мала тухакансене хаклă парнесемпе дипломсем, медальсем парса чыслаççĕ.

Йĕркелӳ комитечĕ.

Сывă пурнăç йĕркишĕн

Малта – «васкавлă пулăшу»

Муркашри тĕп больницăра ĕçлекенсем кăçалхипе иккĕмĕш хут хăйсен ăмăртăвне пуçтарăнчĕç. Спорт çуртне кашниех савăк кăмăлпа, ăшă туйăмсемпе килни зала кĕрсенех палăрчĕ.

Волейбол вăййине пĕлтĕрхи ăмăртура кубок çĕнсе илнисем – хирурги уйрăмĕ – тата васкавлă пулăшу уйрăмĕн командисем пуçларĕç. Пурĕ вара шурă халатлисем 6 команда йĕркеленĕ.

Медицина ĕçченĕсем кулленхи ĕçре хăйсенчен пулăшу ыйтма пыракансене спортпа туслашма чĕнсе каланине спортзалта ĕçпе çирĕплетсе пачĕç. Паллах, вăйă ĕçрен канса илмелли пĕчĕк самант çеç пулчĕ. Анчах та пурне те çурхи хăпартланулăх парнелерĕ.

Çĕнтерӳçĕсĕр нимĕнле ăмăрту та пулмасть. Кунта та – «Эпир – сывă пурнăç йĕркишĕн!» ятпа иртекен ăмăртура – çаплах пулчĕ. Куçса çӳрекен кубока васкавлă пулăшу команди çĕнсе илме пултарчĕ. Хирурги уйрăмĕн тата поликлиника командисем призлă вырăнсем йышăнчĕç. Чи пĕлтерĕшли вара кам миçемĕш пулнинче мар, пĕрле пухăнса вăхăта усăллă ирттерсе ырă тĕслĕх кăтартнинче.

Н. НИКОЛАЕВА.

Вĕренекенсем валли

Олимпиадăна хутшăнар-и?

Федераллă налук службин районсем хушшинчи инспекцийĕ кăçалхи апрелĕн 19-мĕшĕнче налук пĕлĕвĕ енĕпе шкул ачисем хушшинче олимпиада ирттерме палăртать. Вăл 9–10-мĕш тата 11-мĕш классенче вĕренекенсем хушшинче уйрăм пулать.

Пĕрремĕш тапхăр çĕнтерӳçисене апрелĕн 20-мĕшĕнче комисси палăртать. Финала налук службин Чăваш Республикинчи управленийĕ 2011 çулхи апрелĕн 11-мĕшĕнче ирттерет. Тĕплĕнрех налук службин сайтĕнчен пĕлме пулать: www.21.nalog.ru.

Организация изготавливает и продает теплицы разных размеров, банные печи, сетки-рабицы, кованные заборы, трубы разных диаметров. Тел.: 8-937-390-73-51.

Спутниковые антенны «ТРИКОЛОР». Установка, гарантия. 6800 руб. Тел.: 8-905-345-77-19. 5-7.

В Москву и Московскую обл. требуются: фасовщицы-упаковщицы, грузчики (кондитерские фабрики, молочное производство, снековая продукция, мясокомбинаты, склады). Питание, проживание предоставляются. Вахта. З/п от 20000 руб. (сдельная). Тел.: 8(8352)23-22-22. 2-5.

БЕТОН, РАСТВОР любых марок. Тел.: 38-87-78, 8-927-66-88-778. Песок, ОПГС (гравмасса), щебень. Тел.: 38-84-40, 8-927-66-88-440. Доставка миксерами, самосвалами. 11- 50.

Продаем: асфальт, торф, песок (речной, карьерный), ОПГС (гравмасса), щебень (гранитный, известковый), керамзит.
Тел.: 8-903-358-22-24, 8-905-343-91-07, 44-22-24. 2-5.

* * *

ОАО «Моргаушскавтотехсервис» предоставляет в аренду помещения административного корпуса под офисы, а также производственные помещения по адресу: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября. д. 23.
Тел.: 62-7-90, 62-1-43.

Тав тăватпăр

Апрелĕн 8-мĕшĕнче юратнă атте, асатте, Çурлатри ялĕнче пурăннă Викентий Терентьевич Волков 84 çула кайса пирĕнтен ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайрĕ. Ăна юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, пускилсемпе ял çыннисене вăхăт тупма пултарнăшăн, çывăхри тата аякри тăвансене инçе çула пăхмасăр пĕрле пулнăшăн, тус-юлташсене йывăрлăхра пулăшу панăшăн, водительсене шыв-шура пăхмасăр çӳреме пултарнăшăн пурне те чĕререн тухакан тав сăмахĕ калас килет.

Волковсем, Леонтьевсем.

пластиковые ОКНА
Немецкое качество
Окна STAR
6-камерный профиль
ПО ЦЕНЕ 3-камерного
скидки до 35%
подробности по телефонам: 37-66-44
Пенсионерам доп. скидки
Офис продаж в здании рынка с.Моргауши
Окна стали дешевле...

Пĕлтерӳсем. Объявления

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.
Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 5-10.

Продаю: гравмассу, щебень, песок, керамзит, торф с доставкой. Скидки. Тел.: 8-927-668-70-15. 2-12.

Продаю теплицы от производителя: 3мх4м, 3мх6м, 3мх8м, 3мх10м и т. д. Тел.: 8-903-322-45-77. 3-8.

* * *

Ĕне, вăкăр, пăру, сурăх туянатăп.
Тел.: 60-7-10, 8-905-343-60-63. 4-5.

* * *

Продаю пропаренные качественные керамзитобетонные блоки, песок речной, гравмассу, керамзит, цемент. Адрес: «Моргаушагропромснаб».
Тел.: 8-905-340-07-78. 3-5.

* * *

Т-150 тракторпа уйрăм çынсен (пĕр гектартан кая мар) çĕр лаптăкĕсене сухаласа тата культиваци туса пама пултаратпăр. Хакĕ калаçса татăлнă тăрăх. Тел.: 8-917-650-63-77. 1-3.

* * *

Продаю: кирпич одинарный М-100; М-125; М-150; керамический полуторный М-125; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк, некондиция, гравмассу, керамзит. Доставка и разгрузка на манипуляторе. Документы.
Тел.: 8-903-358-20-97, 8(8352) 44-20-97. 7-9.

* * *

Продаю трактора: МТЗ-80 ЮМЗ-6Л, большая кабина, 1988 года выпуска. Рено, меган-сценик, 2000 года выпуска, серебристый, 1,4 бензин МКПП, кондиционер.
Тел.: 8-906-384-79-42, 8-960-307-09-20.

* * *

Покупаем пух-перо свежее, а также старые подушки и перины. С выездом на дом.
Тел.: 8-963-121-75-92. Ирина.

* * *

Бурение скважин на воду, установка, монтаж, доставка колец диаметром 1 м.
Тел.: 8-903-066-76-49; 8-906-385-44-75. 5-5.

* * *

Продаются овцы романовской породы, свинина беконная. Цена договорная.
Тел.: 89373841041; 89196632409. 4-5.

* * *

Халăхран хаклă хакпа ĕне, вăкăр, тына ашăн е чĕрĕ виçепе туянатпăр. Тел.: 89196719626. 9-10.

* * *

«Моргаушская» чăх-чĕп фабрики» ОАО 2011 çулхи апрелĕн 25-мĕшĕнчен 1 çул та 6 уйăхри («Хайсекс белый» ăратлă), çăмарта тăвакан чăхсем 70-шер тенкĕпе сутма пуçлать. Тел.: 8(83541)65-2-48. 3-5.

* * *

В д. Юнгапоси на территории МСО «Моргаушская» открылся магазин«СЕЛЬХОЗЗАПЧАСТИ». Тел.: 89603048267. 7-9.

* * *

Продаю: культиватор-окучник КОН-2,8 с ротационными боронами; культиватор навесной КПС-4; трехкорпусный плуг ПЛН-3-35; газофицированный новый кирпичный дом с надворными постройками и приусадебным участком площадью 0,40 га. Тел.: 8-902-660-38-70, 8-902-660-53-57, 8-965-683-69-75.

* * *

Пĕрре пăруланă ĕне сутатăп. Тел.: 8-903-476-94-73.

* * *

23-27 кг таякан, 250 тенкĕ тăракан тюкланă утă сутатăп. Тел.: 8-960-313-86-68.

* * *

Вăкăр, тына, ĕне, сурăх туянатпăр. Тел.: 8-903-063-07-57.

* * *

На основании решения Совета директоров ОАО «Моргаушский кирпичный завод» от 06.04.2011г., 11 мая 2011 года в 10:00 часов в здании администрации ОАО «Моргаушский кирпичный завод» по адресу: с. Моргауши, ул. Восточная, д. № 01, Моргаушского района, будет проводиться годовое общее собрание акционеров ОАО «Моргаушский кирпичный завод» по итогам работы общества за 2010 год.

Повестка дня:

1. Определение порядка ведения годового общего собрания акционеров;
2. Избрание членов счетной комиссии;
3. Утверждение годового отчета, годовой бухгалтерской отчетности, в том числе отчетов о прибылях и убытков (счетов прибылей и убытков), а также распределение прибыли, в том числе выплата (объявление) дивидендов, и убытков общества по результатам финансового года;
4. Преобразование открытого акционерного общества «Моргаушский кирпичный завод» в закрытое акционерное общество «Моргаушский кирпичный завод»;
5. Утверждение Устава закрытого акционерного общества «Моргаушский кирпичный завод»;
6. Избрание совета директоров общества;
7. Избрание ревизионной комиссии общества;
8. Утверждение аудитора общества.

Регистрация акционеров и их уполномоченных представителей будет производиться с 09-00 часов 11 мая 2011 года. При себе иметь паспорт или документы, удостоверяющие личность.

Телефоны для справок: 62-1-77 или 62-3-47.

Шатракассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкул коллективĕ çак шкулта директор пулса ĕçлекен Н.А. Мерловăн

АШШĔ

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки вĕсен çемйипе, тăванĕсемпе тата çывăх çыннисемпе пĕрле чун-чĕререн тараннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,5 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкрахчисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Макарова Р.А.
Пичете панă 15.04.2011 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4327.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.